# Чăнлăх

КПРФ Чăваш рескомĕн хаçачĕ № 1 (38) 2020 çулхи раштавăн 22-мĕшĕ

«Раççей Федерацийĕнчи Коммунистсен партийĕ» политика партийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ


## 2020 çулхи суйлав пĕтĕмлетĕвĕ

**Раççей Федерацийĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш Ен районĕсемпе хулисенчи комитечĕсем 2020 çулхи суйлав кампанине ăнăçлă ирттерсе ячĕç, мĕн пур шайри суйлавра кăтартусене лайăхлатрĕç.**

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тата вырăнти хăй тытăмлăх управленийĕсен депутачĕсен авăн уйăхĕн 11-13-мĕшĕсенче иртнĕ суйлавĕ 2021 çулхи Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн тата Раççей Федерацийĕн саккăрмĕш суйлаври Патшалăх Думин суйлавĕ умĕнхи юлашки суйлав пулчĕ.

Пĕрлехи сасăлав кунĕнче, авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнче, республикăри 921397 суйлавçă суйлав участокĕсене пынă. Вĕсен мĕн пур шайри 3730 депутата суйламалла пулнă. Çак шутран 129-шĕ хула депутачĕ, 409-шĕ район депутачĕ, 3192-шĕ хула тата ял тăрăхĕсен депутачĕсем. Çавăн пекех Чăваш Республикин Пуçлăхне те суйламалла пулнă.

Çĕртмен 27-мĕшĕнче КПРФ Чăваш Республикин уйрăмĕн 65-мĕш конференцийĕнче «Раççей Федерацийĕн Коммунистсен партийĕ» политика партийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕнчен ЧР Патшалăх Канашĕн депутатне А.М. Андреева Чăваш Республикин Пуçлăхĕн кандидатне тăратма йышăннă. Республикăри Коммунистсен партийĕн хуласемпе районсенчи уйрăмĕсен конференцийĕсенче вырăнти хăй тытăмлăх управленийĕн депутачĕсен кандидачĕсене тăратнă.

КПРФран пурĕ 815 кандидат сĕннĕ: хуласенче – 149, районсенче – 180, ял тăрăхĕсенче – 486.

Муниципалитет тата территори суйлав комиссийĕсенче регистрациленнĕ хыççăн 750 кандидата суйлава хутшăнма ирĕк панă. Çак шутран хуласенче – 148, районсенче – 144, хула тăрăхĕсенче – 43, ял тăрăхĕсенче – 415 кандидат.

Коронавируспа кĕрешме йышăннă чару мерисем суйлавçăсемпе тÿрремĕн тĕл пулма чăрмантарчĕç пулин те КПРФ Чăваш регион уйрăмĕ партин программа уйрăмлăхĕсене шута илсе агитаци кампанине анлă пуçарса ячĕ.

Агитаци кампанийĕ вăхăтĕнче партин экономикăна тата социаллă сферăна ура çине тăратассипе, малалла талпăнма право тата финанс никĕсне йĕркелессипе, предприятисене пулăшассипе çыхăннă пуçарăвĕсем тĕпре пулчĕç. Ку программăпа пирĕн районсемпе хуласенчи кандидатсем те усă курчĕç. Вĕсем ăна хăйсен нушисене тата ыйтăвĕсене, районсемпе муниципалитетсен аталанăвĕн пуласлăхне тĕпе хурса хăйне евĕрлетрĕç.

Иртнĕ çул çынсен пурнăçĕ мĕн таран кăткăсланчĕ, влаç представителĕсен рейтингĕ те çавăн чухлĕ вăйлăрах чакрĕ. «Влаç партийĕ» иртсе кайнă суйлав кампанийĕпе парти-политика тытăмне хăйне усăллă улăштарма хăтланчĕ.

Пирĕн кандидатсене вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене кĕртес марришĕн уйрăмах хытă тăрăшни сисĕнчĕ. Кандидатсен пĕр пайне тĕрлĕ сăлтав тупса суйлав кампанине хутшăнтармарĕç. Вăйлă юлташсем, малтанах кĕрешме хатĕрленнĕскерсем, пуçламăшĕнчех кĕрешÿрен тухса ÿкрĕç. «Влаç партийĕ» енчи конкурентсем КПРФ кандидачĕсене дистанцирен пăрассишĕн юридици сăлтавĕсемпе усă курчĕç.

Сасăлава висĕ куна тăсни



★ *Александр Андреев Чăваш Республикин Пуçлăхĕн суйлавĕнче Улатăрти коммунистсем хушшинче.*

«влаç партийĕшĕн» усăллă пулчĕ. Хăйсене пăхăнса тăракан электората тĕрлĕ схемăпа сасăлаттарнине ниепле те сăнаса çитерме çук. Килте, вăхăт çитиччен, дистанци, онлайн мелĕсемпе сасăлани – çаксем пĕтĕмпех «Пĕрлĕхлĕ Раççей» оппоненчĕсене курăнман «сăрă зона» туса хума пулăшрĕ.

Суйлава хутшăнакан суя партисен йышне ÿстерчĕç. «Тăван çĕршыв», «Раççей патриочĕсем», «Пенсионерсен партийĕ», «Граждан платформи» граждансене тĕрĕс çултан пăрса яма тата «çĕнĕ вăйсем» «кивĕ партисемпе» конкуренцие кĕнине кăтартма – пĕтĕмпе те пĕр тĕллевпе: «Пĕрлĕхлĕ Раççей» суйлава выляса ан ятăр – йĕркеленĕ политика партийĕсен списокне кĕчĕç.

КПРФ Чăваш Республикинчи уйрăмне «влаç партийĕ» политика конкуренцийĕн çивĕчлĕхне чакарма тата КПРФ кăтартăвĕсене «Пĕрлĕхлĕ Раççей» кăтартăвĕсем патне çывхарасран сыхланма хатĕрленĕ «чăмăрккасене» хирĕç тăма тиврĕ.

«Влаç партийĕ» хăйĕн граждансем каланине илтес мар тесе тата суйлава шăппăн ирттерсе ярассишĕн темĕн те турĕ. Районсемпе хуласенчи массăллă информаци хатĕрĕсем программăсен тата политика çул-йĕрĕн конкурентлăхне çутатас вырăнне ĕç тăвакан влаçăн кулленхи ĕç-хĕлне кăна кăтартрĕç. Çавна пула граждансем «тункатасем» çинче, вĕрентĕве чарса шкулсенче йĕркеленĕ суйлав участокĕсене висĕ кунран пĕринче те пымарĕç.

Сăмахран, Шупашкарта, Чăваш Республикин тĕп хулинче, суйлава пыракансен шучĕ 43 процентпа танлашнă. 200 пин ытла суйлавçă суйлава хутшăнман. Чăваш Республикин Пуçлăхĕн суйлавне пынисем 55 процент. Республикăри 400 пин ытла суйлавçă суйлава хутшăнман.

Апла пулин те влаç шухăшланине пĕтĕмпех пурнăçа кĕртеймерĕ. КПРФ пĕлтерĕшлĕ политика вăйĕ тата «Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн» тĕп оппоненчĕ пулнине çирĕплетрĕ. Унпа танлаштарсан коммунистсем, тĕпрен илсен, хăйсен кăтартăвĕсене лайăхлатрĕç, 2015 çулхи суйлав кампанийĕпе танлаштарсан халăх шанăçне те ытларах тивĕçрĕç. КПРФ кандидачĕсем хăйсен сĕнĕвĕсене суйлавçăсемпе уççăн сÿтсе яврĕç. Парти командăра çивĕч ыйтусене татса пама хатĕр специалистсем пулнине кăтартрĕ.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тата вырăнти хăй тытăмлăх управленийĕн органĕсен суйлавĕсен кампанийĕ вăхăтĕнче КПРФ Чăваш Республикинчи уйрăмĕ «Набат в Чувашии» хаçатăн ятарлă 5 кăларăмне хатĕрлерĕ, пĕтĕмĕшле тираж 222 пин экземпляр, пĕр хутчен 100 пин тиражпа «Голос Чебоксар» хаçат кăларчĕ. «Чебоксарская правда» хаçат час-часах тухса тăчĕ, утă уйăхĕнчен пуçласа суйлав кунĕччен тираж 275 пин экземплярпа танлашрĕ. Мĕн пур кăларăмăн пĕтĕмшле тиражĕ 597 пин экземпляра çитрĕ. Кунсăр пуçне республика уйрăмĕ «Правда» хаçатăн ятарлă кăларăмне 48 пин экземпляр салатрĕ.

Шупашкарта 700 пин ытла листовка тата суйлав умĕнхи ытти агитаци материалне хатĕрленĕ. Çак шута Шупашкар хулин пĕр мандатлă округĕсенчи кандидатсен агитаци хатĕрĕсем кĕмеççĕ. КПРФ кандидачĕсем агитаци материалĕсене автоçулсен хĕрринчи баннерсем, общество чарăнăвĕн павильонĕсем, нумай хваттерлĕ çуртсен лифт кабинисенчи реклама хăмисем çине вырнаçтарнă.

Агитаци ĕçне партин республикăри уйрăмĕн çамрăкĕсем – комсомолецсем тата партин çамрăк активисчĕсем – хастар хутшăнчĕç. Вĕсен куçса çÿрекен бригадисем республикăра пур çĕрте те ĕçлерĕç. Çамрăксен агитаци бригадисене Михаил Данилов йĕркелерĕ тата ертсе пычĕ. Суйлав кампанийĕ хыççăн Михаил Данилов юлташĕсен пысăк шанăçне тивĕçрĕ – ăна Чăваш Енри комсомолецсен пĕрремĕш секретарьне суйларĕç.

Партин республика уйрăмĕ умĕнче тăнă тĕп тĕллевсенчен пĕри сасăлав кăтартăвĕсене сыхласа хăварасси тата суйлава ултавсăр пĕтĕмлетесси пулчĕ. Суйлав участокĕсенче сăнавçăсен ĕçне йĕркелесси те çивĕч тăнă. Пĕтĕмпе 1156 суйлав комиссине, хуласенче – 320, районсенче – 836, сăнавçăпа тивĕçтермеллеччĕ.

Партин хуласемпе районсенчи уйрăмĕсем тăрăшнипе суйлав участокĕсене 1030 сăнавçăна ятăмăр. Хулари мĕн пур участокра сăнавçăсем ĕçлерĕç. Районсенчи хăш-пĕр суйлав участокĕ валли çын çитмерĕ.

Коронавирус пандемийĕ вăхăтĕнче влаç йышăннă чарусене пула пирĕн кандидатсем халăхпа тĕл пулаймарĕç, «влаç партийĕ» суйлава висĕ куна тăсса çынсене хăй майлă ытларах çавăрнине, администраци ресурсне вăйлатнине пăхмасăр пирĕн кандидатсем хăйсене тивĕçлĕ кăтартрĕç. Çамрăк коммунистсен пысăк ушкăнĕ пĕр мандатлă округсенче çĕнтерчĕ. Пурĕ республикăра коммунистсен партийĕнчен 103 çын суйланнă депутатсен йышне кĕчĕ. 2015 çулхи суйлаврипе танлаштарсан депутатсен шучĕ 38 çын /57 процент/ чухлĕ ÿсрĕ.

Вĕçĕ 2-мĕш стр.

# 2020 çулхи суйлав пĕтĕмлетĕвĕ

*Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.*

Пуçласа Çĕнĕ Шупашкар хулинче пĕр мандатлă округра КПРФ тăратнă кандидат мала тухрĕ. Чăваш Республикин Пуçлăхĕн кандидачĕ А.М. Андреев ЛДПР, «Раççей пенсионерĕсем» тата ытти суя партисен кандидачĕсене чылай кая хăварса иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ.

Муниципалитет суйлавĕ пирки калас тăк, кандидатсене ытларах тăратнă районсенче кĕрешӳ ăнăçлă вĕçленчĕ. Сахал йышлă районсенче хĕрӳ тупăшу пулаймарĕ.

КПРФ Шупашкар райкомĕ вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене чи нумай кандидат – 129 çын – тăратнă.

Ытти районсенче çакăн евĕрлĕрех ӳкерчĕк: Йĕпреç райкомĕ – 110 кандидат, Патăрьел райкомĕ – 51 кандидат, Улатăр райкомĕ – 48 кандидат, Сĕнтĕрвăрри райкомĕ – 32 кандидат, Муркаш райкомĕ – 26 кандидат, Çĕрпӳ райкомĕ – 25 кандидат, Вăрмар тата Шăмăршă райкомĕсем – 21-шер кандидат, Хĕрлĕ Чутай тата Етĕрне райкомĕсем – 19-шар кандидат, Канаш райкомĕ – 18 кандидат, Тăвай райкомĕ – 17 кандидат, Комсомольски райкомĕ – 16 кандидат, Куславкка райкомĕ – 13 кандидат, Элĕк тата Вăрнар райкомĕсем – 9-шар кандидат, Красноармейски тата Çĕмĕрле райкомĕсем – 8-шар кандидат, Елчĕк райкомĕ – 3 кандидат, Çĕнĕ Шупашкар хула комитечĕ – 24 кандидат, Улатăр тата Шупашкар хула комитечĕсем – 20-шер кандидат, Çĕмĕрле хула комитечĕ – 13 кандидат Канаш хула комитечĕ – 6 кандидат.

Суйланнă депутатсем Шупашкар районĕнче чи нумаййисем – 26 çын. Йĕпреç районĕнче 18 депутат, Патăрьел районĕнче 9 депутат, Сĕнтĕрвăрри районĕнче 8 депутат, Муркаш тата Çĕрпӳ районĕсенче 7-шер депутат, Вăрмар районĕнче 6 депутат, Куславкка тата Шăмăршă районĕсенче 3-шер депутат, Хĕрлĕ Чутай тата Тăвай районĕсенче 2-шер депутат, Элĕк, Комсомольски, Красноармейски, Çĕмĕрле, Тăвай районĕсенче 1-ер депутат суйланнă.

Улатăр, Вăрнар, Канаш, Пăрачкав, Елчĕк районĕсенче КПРФ вырăнти уйрăмĕсем тăратнă пĕр кандидат та депутата тухайман.

Шупашкар хулинче парти списокĕпе 4 депутат суйланнă, Çĕнĕ Шупашкарта – 2 депутат, Çĕмĕрлере – 1 депутат.

Улатăр тата Канаш хулисенче те Коммунистсен партийĕн пĕр кандидачĕ те депутата суйланман.

Иртсе кайнă суйлава пĕтĕмлетсе калас тăк, 2020 çулта «Пĕрлĕхлĕ Раççей» кандидачĕсене çĕнтерсе пухнă опытпа 2021 çулхи суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче те анлă усă курмалла.

Çапла майпа кăна Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн тата Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин суйлавĕсенче çĕнтерме, «влаç партийĕн» представителĕсенчен регион тата федераци парламенчĕсенче депутат мандачĕсене ытларах туртса илес шанăç пысăкрах пулĕ.

# Партири юлташсем вĕсен çитĕнĕвĕсемпе мухтанаççĕ!

**Муниципалитет суйлавĕсенче чи нумай сасă пухнă кандидатсене чыс та мухтав!**

КПРФ Рескомĕ хăйсен округĕсенче 50 процентран ытларах сасăланă кандидатсене уйрăммăн палăртать.

Муркаш районĕнчи Юнкăпуç ял тăрăхĕнчи сасăлав списокне кĕртнĕ 117 суйлавçăран 82-шĕ Николай Евгеньевич Кудряшовшăн сасăланă. Округра пурăнакансен çурри ытла пайĕ ун майлă пулнине çирĕплетнĕ. Вăрмар районĕнчи Шăхаль ял тăрăхĕнче сасăлама ирĕк пур 75 çынран 42-шĕ Владимир Сергеевич Федоровшăн сасăланă. Шупашкар районĕнчи Чăрăшкасси ял тăрăхĕнче 97 суйлавçăран 52-шĕ Иван Владимирович Степанова хăйсен сассине панă.

Вăрмар районĕнчи Аслă Пинер ял тăрăхĕнче КПРФ кандидачĕсем П.В. Арманов, А.В. Васильев тата С.Н. Марков хăйсен округĕсенче чи нумай сасă пухнă. Çĕрпӳ районĕнчи Метикасси ял тăрăхĕнче Артем Валентинович Артемьевшăн та нумай çын сасăланă.




★ *КПРФ Чăваш рескомĕнче Шупашкар районĕнче суйланнă депутатсемпе йĕркеленĕ тĕлпулу.*

Çĕрпӳ районĕнче чи нумай сасă пухнисем: Михайловка ял тăрăхĕнче Герман Васильевич Арсентьев, Рынкă ял тăрăхĕнче Олег Львович Семенов, Туçи ял тăрăхĕнче Алексей Николаевич Владимиров. Тăвай районĕнче суйлавçăсен 50 ытла процентĕ çак кандидатсемшĕн сасăланă: Тĕмер ял тăрăхĕнче Михаил Васильевич Николаев тата Чутей ял тăрăхĕнче Виталий Леонидович Шерне. Патăрьел районĕнчи Тури Туçа ял тăрăхĕнчи Рамиль Бедертдинович Шарафутдиновшăн тата Çĕньял ял тăрăхĕнчи Алексей Федорович Михайловшăн та суйлавçăсен 50 ытла процентĕ хăйсен сассине панă. Йĕпреç районĕнчи Березовка ял тăрăхĕнчи Вячеслав Васильевич Раевский, Ирçе Çармăс ял тăрăхĕнчи Илья Николаевич Лукиянов, Пучинке ял тăрăхĕнчи Владимир Ильич Степанов та 50 ытла процент сасă пухнă. Комсомольски районĕнчи Чĕчкен ял тăрăхĕнчи Шейхулла Шейхетдинович Гималдиновшăн та, Красноармейски районĕнчи Еншик Чуллă ял тăрăхĕнчи Леонид Яковлевич Никандровшăн та, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Карапаш ял тăрăхĕнчи Алексей Петрович Даниловшăн та суйлавçăсен çурри ытла пайĕ сасăланă.

Çӳлерех асăннă депутатсем пурте хăйсен конкуренчĕсенчен чылай маттуртарах. Саламлатпăр вĕсене!

# КПРФ кандидачĕ республика Пуçлăхĕн должноçĕшĕн пынă кĕрешӳре Олег Николаева çĕнтернӗ!

**Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Александр Андреев, КПРФ республика Пуçлăхĕн суйлавне хутшăнма тăратнă кандидат, хăш-пĕр суйлав округĕнче Чăваш Енĕн халăхи вăхăтри ертӳçине Олег Николаева çĕнтернĕ.**

Шупашкар районĕнчи Кӳкеç поселокĕнчи ултă участокра Александр Андреевшăн суйлавçăсен 47-55 процентĕ сасăланă. Пурĕ Александр Андреевшăн Шупашкар районĕнче 6145 суйлавçă хăйсен сассине панă, çакă сасăлава хутшăннисен 22,88 процентĕпе танлашать.

Чи лайăх кăтартусем Шупашкар районĕнче – 22,88 % /6 145 сасă/; Шупашкар хулин Мускав районĕнче – 13,72 % /8 804 сасă/; Ленин районĕнче – 13,21 % /5 858 сасă/; Калинин районĕнче – 12,67 % /6 709 сасă/; Çĕнĕ Шупашкарта – 11,54 % /4 613 сасă/; Шăмăршă районĕнче – 11,12 % /867 сасă/; Канаш хулинче – 10,39 % /1 359 сасă/.

КПРФ Чăваш Республикин уйрăмĕ тăратнă Александр Андреев кандидатшăн республикăри 52580 суйлавçă е суйлава хутшăннисен 10,29% сасăланă. Çапла майпа вăл иккĕмĕш вырăн йышăннă, Пуçлăх должноçĕшĕн кĕрешнĕ ытти кандидата палăрмаллах хыçа хăварнă. Çакă КПРФ лидер пахалăхĕсене, чăннипех те пĕртен-пĕр оппозици партийĕ пулнине, халăх ăна шаннине çирĕплетет.

Материалсене
КПРФ Чăваш рескомĕн секретарĕ,
Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн
депутачĕ **Г.В. Данилов** хатĕрленĕ.

# Ленин – 6 çулта, Путин 20 çулта мĕн тума пултарнă?

Раççей Президенчĕ Владимир Путин интервьюсенче Владимир Ленина пĕр хутчен çеç мар критиклерĕ. Е унăн шухăшĕпе Ленин «Раççей айне бомба хунă», е «Раççей патшалăхне аркатнă», е тата СССР саланнăшăн айăплă. Анчах та вăл е ку ĕçчене унăн ĕçĕсем тĕрĕх хакламалла, çавăнпа Ленин влаçра пулнă 6 çулта тата халь-хи Президент 20 çулта мĕн тунине танлаштарса пăхар.

Владимир Ильич Ленин, тĕрĕссипе, влаçра 6 çул çеç, 1917 çултан пуçласа 1923 çулччен, пулнă, 1924 çулта чирлесе вилнĕ. Кĕске çак вăхăтра та вăл питĕ нумай ĕç тума ĕлкĕрнĕ. Чи малтанах каласа хăвармалла, Ленин Граждан вăрçинче çĕнтерме тата АПШ, Англи, Франци, Япони, ытти патшалăхсен интервенчĕсене сирсе яма пултарнă.

Ленинăн тава тивĕçлĕ ĕçĕсенчен пĕри вăл – хут пĕлменлĕхе пĕтерме тата çамрăк совет патшалăхĕнче вĕренӳ пахалăхне ӳстерме пуçарнă кĕрешӳ. 1917 çулта граждансен пĕрре виççĕмĕш пайĕ кăна хутла пĕлнĕ, 1926 çул тĕлне çак кăтарту икĕ хут ӳснĕ, 60 процента çитнĕ. Ленин тата большевиксем тытса пынă вĕренӳ политики çĕршывра пин-пин шкул, вун-вун аслă вĕренӳ заведенийĕ уçма май панă. Аслăлăх та аталаннă: 1918-1919 çулсенче 33 аслăлăх-тĕпчев институчĕ йĕркеленĕ, 1923 çул тĕлне вĕсен шутне 56-а çитернĕ.

Путин вĕрентӳре тата аслăлăхра мĕнле çитĕнӳ тунă? Кунта «мухтанмалли» те пур. 2000 çулта 68,1 пин шкул пулнă тăк, 2016 çул тĕлне вĕсем 41,78 пин тăрса юлнă. 26 пин ытла чакнă! Пĕчĕк ялсенчи шкулĕсене уйрăмах йывăр килет, рентабельлĕх çук тесе вĕсене хупаççĕ, ачасен пысăк ялсенчи шкулсене вĕренме çӳреме тивет. Тĕплĕ шухăшламасăр тунă «реформăсене» пула аслă вĕренӳ те шар курчĕ, унăн пахалăхĕ палăрмаллах чакрĕ. Ленин вăхăтĕнче чăн-чăн аслăлăх-тĕпчев институчĕсем уçăлнă пулсан, Путин тапхăрĕнче «Сколково» тата «Роснано» уçăлаççĕ, вĕсем Раççей бюджечĕн укçине кăна «ĕмсе» пурăнаççĕ, нимĕнле чăн çитĕнӳ те çук.

Ленинăн тепĕр пысăк çитĕнĕвĕ – ГОЭЛРО планĕ е çĕршыв электрификацийĕн планĕ. Кĕске вăхăтра вун-вун ТЭЦ тата ГЭС хута янă, çĕршыва электрификацилене. 1917 çулта çĕршывра 75 электростанци кăна пулнă, 1927 çул тĕлне 858 электростанци туса лартнă. Çавăн пекех çĕр-çĕр çĕнĕ производство йĕркеленĕ, ГОЭЛРО планĕ çĕршывăн малашлăхри индустриализацийĕн никĕсĕ пулса тăнă, ăна Сталин вĕçленĕ.

Путин вăхăтĕнче çĕршыв совет саманин еткерлĕхне пĕтерсе пурăнать, çĕршывăн чăн-чăн модернизацийĕ пирки сăмах та пымасть. Тĕп фондсем е инфратытăм тата производство хатĕрĕсем Росстатăн официаллă кăтартăвĕсем тăрăх 2016 çул тĕлне 50 процента яхăн кивелнĕ. Паян предприятисен шучĕ çиçĕмле хăвăртлăхпа чакнинчен те тĕлĕнмелли çук. Ленин вăхăтĕнче предприятисен шучĕ вунă çулта ӳснĕ пулсан, Путин вăхăтĕнчи вунă çулта экономикăн тĕп отраслĕсенчи предприятисем 5,7 пин сахалланнă.

Уйрăмлăхсем тӳрех куçа тăрănаççĕ. Ленин кĕске вăхăтра хăватлă патшалăх туса хума тата тĕнчене аталанăвăн социализм çулне кăтартма пултарнă, истории политик тата философ пек кĕрсе юлнă, унăн ĕçĕсене паян та тĕнчипех тĕпчеççĕ. Путин вăхăтĕнче вара Раççей чĕртаварлă капитализм экономики пулса тăчĕ. Çав вăхăтрах Раççей тĕнчере долларлă миллиардсен шучĕпе лидер шутланать. Ленин пурин валли те социализм тунă пулсан, Путин олигархсемпе чиновниксем валли çăтмах хатĕрлет.

**redaktor,**
**zen.yandex.ru.**

# Ельцин ячĕ – Раççей намăсĕ!

## *КПРФ фракцийĕ Мускав хула Думинче калани*

Раççей Федерацийĕн Коммунистсен партийĕн Мускав хула Думинчи фракцийĕ Екатеринбургри «Ельцин-центр» ĕç-хĕлне сивлет, унăн филиалне Мускавра уçассине хирĕçлет.

Борис Ельцин ячĕ 1991 çулта Совет Союзне аркатнипе, 1993 çулта РСФСР Аслă Канашне персе пăрахнипе тата Конституцие хирĕçле майпа влаçа ярса илнипе, 1996 çулта Президент суйлавне фальсификациленипе, 1998 çулхи дефолтпа, çĕршыва олигархсене сутса янипе çыхăннă.

Раççейĕн пĕрремĕш Президенчĕн тата унăн «младореформаторĕсен» командин айăпĕпе çĕршыв халăхĕн пысăк пайĕ чухăнлăха кĕрсе ӳкрĕ. Вăрă-хурах алхасма пуçлани, наркомани, алкоголизм сарăлни, килсĕр-çуртсăр, ĕççĕр тăрса юлнă пин-пин çын, халăх йышлă вилни – акă мĕн хăварнă хăй хыççăн Ельцин.

«Ельцинизм» ĕмĕрĕнчи аркатакансене сивлес вырăнне 2016 çулта Екатеринбургра бюджетăн 7 миллиард тенкипе 90-мĕш çулсенчи «демократи ирĕклĕхĕ» тата «либераллă ырлăхсем» çинчен каласа кăтартакан «Ельцин-центр» туса лартрĕç. Центр материалĕсенче çав çулсенчи антисоциаллă экономика политики пирки пĕр сăмах та çук. «Ельцин-центр» тата «Ельцин шуйттанлăхĕн» йĕркелӳçисем пирĕн историе, халăха, Совет влаçне хурлакан, сивлекен суя сăмах сараççĕ, хăйсен анăçри хуçисен умĕнче «çулланса» тăраççĕ.

Анчах та Уралта влаçшăн хăватлă патшалăха аркатнă çыннăн ятне бюджет укçи-тенкипе «тасатас» тени çителĕксĕр пек туйăннă пулас. Темиçе çул Тăван çĕршывăн тĕп хулинче – Мускавра – «Ельцин-центрăн» филиалне çĕклеççĕ. Раççей Правительстви 2010 çулта Долгоруков-Бобринскийсен çуртне реставрацилес сĕмпе «Ельцин-центра» тӳлевсĕр çур ĕмĕр усă курма пачĕ. Халĕ Мускав варринче историе ваpалакан черетлĕ филиал çĕкленет. Тĕп хулари «Ельцин-центра» реставрацилеме тесе ку таранччен бюджет укçине икĕ миллиарда яхăн тенкĕ пĕтернĕ. Халĕ юсав ĕçĕсен хакĕ ӳснĕ, «Ельцин-центра» федераци влаçĕсем 2021 çул валли 300 миллион тенкĕ уйăрса панă.

КПРФăн Мускав хула Думинчи фракцийĕ пирĕн халăх историйĕнчен çапла майпа мăшкăланине хирĕçлеççĕ. Эпир пирĕн çĕршывра, уйрăмах Мускавра «Ельцин-центр» пулнине хирĕç. Ельцин ячĕ – Раççей намăсĕ! Эпир çĕршыва аркатнă узурпатор Ельцинăн хальхи вăхăтри хӳрешкисене çырлахтарассишĕн бюджет укçи-тенкине тăкаклама чарăнма ыйтатпăр! КПРФăн Мускав хула Думинчи фракцийĕ Долгоруков-Бобринскийсен çуртне реставрациленĕ хыççăн унта Мускаври ача-пăча пултарулăх центрне уçма сĕнет!

**Н.Г. Зубрилин**,
Мускав хула Думин депутачĕ,
КПРФ фракцийĕн ертӳçи.

***И.В. Сталин çуралнă кунĕ тĕлне***

# Сталинпа пулса иртнисем



Черчилль Ялта конференцийĕ вăхăтĕнче тарăхсах çитнĕ. Сталин сĕнĕвĕсене пĕр чăрмавсăр йышăнаççĕ. Вĕсем вара Рузвельтпа иккĕшĕ ăна хирĕçлесе нимĕн те тăваймаççĕ. Черчилль аптăранипе юлашкинчен Рузвельта ӳкĕте кĕртет: иккĕшĕ Сталина лайăх мар лару-тăрăва кĕртсе ӳкерессипирки каварлашаççĕ. Тепĕр кун ирхине Черчилль Сталина сывлăх суннă май: «Эпĕ паян, Сталин мистер, питĕ тĕлĕнмелле тĕлĕк куртăм. Эпĕ – Çĕр чăмăрĕн хуçи пек», – тесе калать.

Рузвельт та ун майлă çаптарать: «Çапла, çапла, Сталин мистер, эпĕ те тĕлĕк куртăм. Эпĕ те пĕтĕм тĕнчене хамăн алăра тытса тăратăп пек».

– Сире мĕн тĕлленчĕ паян, Сталин мистер? – тет Черчилль, пысăк влаçлă мĕн пур вырăна Рузвельтпа иккĕшĕ йышăнни пирки шахвăртаса.

– Черчилль господин, эпĕ те тĕлĕк куртăм, – тет Сталин, – анчах та çав вырăнсене сана та, Рузвельта та йышăнма ирĕк памарăм…

* * *

Иккĕмĕш Тĕнче вăрçи хыççăн татса паман ыйту чылай юлнă-ха. Сталинпа Черчилль нимĕç флочĕпе мĕн тумаллине сӳтсе яваççĕ. Сталин флота пĕр пек пайласа илме, унпа кашни хăйне кирлĕ пек усă курма сĕнет. Черчилль вара карапсене шывра путарасшăн. «Хăвăн пайна тыт та путар», – тет ăна хирĕç Сталин.

* * *

Каганович Сталина Хĕрлĕ тӳрем реконструкцийĕн проекчĕпе паллаштарать. Сталин макета питĕ кăсăкланса тишкерет. Каганович кивĕ тата çĕнĕ çуртсен макечĕсене вырăнтан вырăна куçарса хĕрсе кайсах ăнлантарать. Сталин шăпăрт итлет. Каганович вăл чĕнмесĕр тăнине хăйне майлă ăнланса тĕп самант патне куçать: Василий Блаженный храмне алла илме хатĕрленет. Сасартăк Сталин сăмах хушать: «Ларт вырăнне». Çакăнпа калаçу вĕçленнĕ.

* * *

Мускав метрополитенне уçас умĕн 1935 çулта «Каçхи Мускавăн» тĕп редакторĕ хаçат ĕçченĕсене ĕç çыннисен паллă çак пулăма мĕнле хаклани ыйтса пĕлмелли çинчен калать. Журналистсем ĕçе пикенеççĕ. Трофим Юдин репортер кăна задание пурнăçлама васкамасть. Унăн пурнăçне чăрсăр шухăш пырса кĕнĕ: Сталинтан хăйĕнчен интервью илес. Вăл темиçе кун каялла кăна çĕнĕ метропа çӳресе курнă.

Юдин Кремле шăнкăравланă, мĕн тĕллевпе чăрмантарнине пĕлтернĕ. Ăна кăшт тăхтама хушнă… Телефон кĕпçинче Сталин сасси илтĕнсен Юдин çухалса кайнă, сасăсăр пулса ларнă, аран-аран малтанах хатĕрлесе хунă сăмахсене каланă.

– Ырă кун пултăр, Сталин юлташ, «Каçхи Мускав» корреспонденчĕ Трофим Юдин калаçать.

– Кам-кам?

– Трофим Юдин, Сталин юлташ, «Каçхи Мускав» хаçатран. Эпир хамăрăн метро пирки граждансем мĕн шухăшлани пирки репортаж хатĕрлетпĕр. Сталин юлташ, манăн сирĕнтен ыйтас килет: метро килĕшрĕ-и?

– Çырăр: метро килĕшрĕ. Мускаври метро – тĕнчере чи лайăххи. Сталин.

– Пысăк тав, Сталин юлташ!

Савăнăçлă тата мăнаçлă Юдин интервью пирки тĕп редактора каласа кăтартать. Лешĕ ĕненмест. Мĕн тумалла? Пичетлемелле-и? Тен, Юдин суять? Пичетлемесен? Юдин суймасть тăк? «Сталинпа калаçнине çирĕплет, унсăрăн ĕçрен кăларатăп», – тет юлашкинчен тĕп редактор.

Юдин каллех Сталин патне шăнкăравлать.

– Сталин юлташ, мана ĕçрен кăларасшăн. Сирĕнпе калаçнине ĕненмеççĕ.

– Калăр, эпĕ сире ĕçрен кăларма хушмастăп.

Юдина ĕçрех хăварнă. Ултă /!/ тĕп редакторпа ĕçленĕ вăл. Пурте хăраса тăнă унран: тата тем туса кăтартĕ-ха вăл…

**И. ДИКАРЁВА.**

СССР йĕркеленнĕ кун тĕлне

# Пулнă çавăн пек çĕршыв…

Кашни ир хĕвел тухнă, каçхине анса ларнă. Хĕвел пайăркисем ирсерен сывлăм тумламĕсене чуп туса çĕре ыйхăран вăратнă, тавралăха кайăк юрри илемлетнĕ. Савăнăçпа шанăç çуралнă.

Кун кун пек, каç каç пек иртнĕ. Хушăран тÿпене хура пĕлĕтсем хупăрланă, аслати кĕмсĕртетнĕ, çиçĕм йăлтăртатнă.

Çĕршыв халăхĕ ĕçленĕ, хăйĕн ĕçĕпе çĕр питне илемлетнĕ. Пурте телейлĕ пулнă. Çынсем хăйсен çуллуçĕн сăмахне тимлесе вăй хунă. Çак çуллуçăн тĕлĕнмелле хăват пулнă, вăл çынсене ĕнентерме, чун-чĕрисене шанăç кĕртме пĕлнĕ. Вăл калаçнине кулмасăр е куççуль кăлармасăр итлеме ниепле те май килмен, сăмахĕсем чуна, чĕрене шăтарса кĕнĕ. Вăл тарăхнă е çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăхсем çинчен калаçнă чухне пурин те чунĕсем тарăхупа тулнă, пурте паттăрланса, хастарланса кайнă. Çак вăхăтра вăл тем тума та пултарнă. Тăшман çине ыткăнса вилме хушсан çынсем тÿрех вăл каланине пурнăçлама васканă. Хăйĕн халăхне мухтаса каланă сăмахсем çынсене питĕ савăнтарнă. Чи йывăр вăхăтсенче те, йĕри-тавра хăрушлăх тата вилĕм алхаснă чухне те унăн тĕлĕнмелле хăвачĕ хăйĕн вăйне кăтартнă.

Вуншар çул халăх çуллуç хÿттинче телейлĕ пурăннă. Тимĕр хÿме хыçĕнче вĕсене нимĕнле тăшман та хăратма пултарайман.

Вăхăт шелсĕр. Çуллуç вилнĕ. Ун вырăнне урăх çуллуçсем килнĕ. Вĕсем малтанхи çуллуç пирки киревсĕр сăмахсем калама пуçланă. Хăйсен халăхне çутта кăларма аякри çĕршывсенчен ăсчахсене чĕнсе илнĕ. Çынсем вĕсене хăйсен çемйине йышăнма, юлташсем пулма хатĕррине пĕлтернĕ. Анчах те лешсем: «Эпир сирĕншĕн юлташсем мар» – тесе хуравланă. Пуçланă вара вĕсем халăха вĕрентме: тар тăкмасăрах лайăх пурăнма пулать иккен, хăвăн вырăнна теприне ĕçлеттермелле кăна, пĕрлехи пурлăха туртса илсе хăвăн тумалла, тĕрĕслĕхпе чыслăх пирки манмалла.

Питĕ хавхаланса, хитре калаçнă вĕсем. Çынсем тимлĕ итленĕ, кашни сăмах халăха çунатлантарнă. Ăсчахсен сăмахĕсем эрех евĕр çынсен пуçĕсене минретнĕ, татах та татах ĕçе килнĕ чухнехи пек вĕсене вĕçĕмсĕр итлес килнĕ. Çав сăмахсем мĕн таран хăрушă пулнине пĕри те ăнкарман.

– Тăвансем! Вĕсем тĕрĕссине калаççĕ вĕт! Мĕншĕн пĕтĕм пурлăха пайлас мар? Кашниех хуçа пулса тăрас мар? – юлашкинчен нумайăшĕ çапла калама пуçланă.

Ĕлĕкхине, çуллуçа, тĕрĕслĕхпе чыслăха манса çынсем пĕрлехи пурлăха вăрлама пуçланă, хăйсен вăйĕпе тунă ырлăха аркатма тытăннă. Вĕсем мĕн тăвас килнĕ, çавна тунă, çĕткĕнлăх ăсталла çул кăтартнă, çавăнталла утнă. Малашлăх вĕсене пылак та тутлă шăршăллă туйăннă, хитре çамрăк хĕрарăм пек курăннă. Вăл вĕсене: «Пăхăр, мĕнле чипер эпĕ, хăюллă!» – тесе илĕртнĕ.

Çынсем вăрласа тата çаратса çĕршыва çухатнине те, пĕр-пĕрне вĕлерме пуçланине те сиссе юлайман…

Унченхи пекех кашни ир хĕвел тухнă, каçхине вăл çывăрма выртнă. Унченхи пекех хĕвел пайăркисем сывлăм тумламĕсене чуп туса çĕре вăратнă. Кун кун пек, каç каç пек иртнĕ…

Пĕтĕмпех унченхи пекех… Анчах та çынсем темĕн пĕлтерĕшлине çухатнă. Вĕсен хитре пурнăç тăвас шанăçĕ пĕтнĕ…

**И. Никитчук**,
доктор технических наук.

# Раççейре коррупцие мĕнле майпа пĕтермелле Павел Грудинин шухăшĕ

Павел Грудининпа паллаштарма кирлĕ мар. Раççейри паллă çак политика нумай çын пĕлет, хисеплет тата юратать. Вăл Мускав хулин территорийĕнче вырнаçнă хаклă çĕр лаптăкĕсене сутса салатма памарĕ. Çак çĕрсем унăн тата унăн совхозĕн. Тĕрĕссипе, вăл çак ял хуçалăх предприятийĕн пысăк пайĕн хуçи, çав çĕршĕн миллионсем илме пултарнă. Совхоз вара çаплипех ĕçлет, ăнăçлă ĕçлесе пырать, унта вăй хуракан çынсем питĕ пысăк шалу илеççĕ.

Грудинин совхозĕнчи ача сачĕ пирки уйрăммăн аса илес килет. Унта ачасем тÿлевсĕр çÿреççĕ, анчах та вăл питĕ Диснейлендăн пĕр пайне аса илтерет.

Павел Грудинин социаллă тĕрĕслĕх пирки яланах каланă. Акă нумаях пулмасть Раççейре коррупцие мĕнле майпа пĕтерме пуласси пирки калаçрĕ. Мĕн сĕнет-ха вăл?

Чи малтанах Коррупципе кĕрешекен наци бюроне туса хумалла, мĕншĕн тесен Генеральнăй прокуратура ĕçлени çителĕксĕр. Бюровăн Президента тата тĕп партисен лидерĕсенчен тăракан координаци канашне кăна пăхăнмалла. Çĕршыври чи пуян çынсемпе, чылай хучне пысăк должноçсенчи чиновниксемпе кĕрешме тивсен çĕршывра коррупцие епле çĕнтерме пулать? Вĕсен влаç эшелонĕн чи çÿлти картлашкисем çинче çыхăнусем тата пысăк укça пур. Грудинин шухăшĕпе, бюро çак ыйтусене татса пама пултаратех.

Грудинин ООН Конвенцийĕн коррупципе кĕрешесси çинчен калакан 20-мĕш статйине ратификацилеме сĕнет.

Статьян тĕп шухăшĕ активсен виçи тупăшран пысăкрах пулма пултараймасть тенинче. 100 пин тенкĕ шалу илекен чиновник 7 миллион долларлăх çурт лартаймасть.

Коррупципе кĕрешекен ытти çĕршывсен опычĕпе те усă курмалла. Ку ыйтусене Китай, Сингапур ăнăçлă татса параççĕ. Малтанхи 40-50 çулта СССР та коррупципе ăнăçлă кĕрешнĕ.

Мĕн пур бизнес ăнăçлăхĕ, Грудинин каланă тăрăх, политикăри çыхăнусенчен килет. Ataланас тесен бизнеса пысăк должноçри чиновниксемпе çыхăннă хутшăнусем кирлĕ. Çакă вăл коррупци ĕнтĕ, бизнеса йĕркеллĕ аталанма, экономикăна вăйлатма чăрмантараканскер. Павел Николаевич пĕлтернĕ тăрăх, ăна 5 миллион долларла Общество палатин членĕ пулма сĕннĕ. Анчах та вăл килĕшмен, çав укçапа ача сачĕ туса лартнă.

Влаç хăй коррупципе кĕрешесшĕн мар. Чиновниксене пĕтĕмпех çырлахтарать. Нимĕнле улшăну та пулмасан бизнес, çавăн пекех çĕршыв та, аталанма пуçлаймасть.

Манăн шухăш çакăн пек: çĕршывра коррупцие тĕппипех пĕтерме çук, мĕншĕн тесен влаç хăйĕнпе хăй кĕрешмест. Коммунизм тата социализм патне те куçма çук. Влаçа оппозици килсен те лайăх улшăнусем пулас çук. Анăç Европăна тата Америкăна çĕршывсем экономикăна çĕклеме мар, вĕсемпе усă курма кăна кирлĕ, вĕсемшĕн коррупци пурри вырăнлăрах та. Украинăра Коррупципе кĕрешекен наци бюроне туса хунă, анчах та унран усси нимĕн чухлĕ те çук.

Тĕрĕссипе, çынсем хăйсем те пысăк улшăнусем тума хатĕр мар, вĕсем мĕн пуррипе пурăнаççĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенче вăрçăсем, революцисем пулнă. Паян вара диван çинче шăпăрт ларма, телевизор пăхма, хăвăрт пиçекен лапша çиме пулать.

Çынсем мĕн те пулин пысăкраххине илес тесен малтан çухатма тивни çинчен маннă.

**Яндекс Дзен.**

## 2021 çулта пенсисене ÿстереççĕ-и?

Федераци Канашĕн социаллă политика комитечĕн председателĕн заместителĕ Елена Бибикова «Парламентская газета» хаçата пĕлтернĕ тăрăх, кăрлачăн 1-мĕшĕнчен ĕçлемен пенсионерсен страховани пенсийĕсене 6,3 процент индексацилеççĕ. Вăтамран ĕçлемен пенсионерсен пенсийĕ 1 пин тенкĕ ÿсет.

Нарăсăн 1-мĕшĕнчен мĕн пур ушкăнри инвалидсен тата хĕрÿ вырăнсенче пулнă ветерансен тÿлевĕсене 2020 çулта палăртнă инфляци виçи чухлĕ, 3,7-3,8 процент, индексацилеме палăртнă.

Ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен социаллă пенсисем 2,6 процент ÿсеççĕ.

Ĕçлекен пенсионерсен пенсийĕсене влаç темиçе çул харăсах индексацилемест.

## Чăваш Республикинчи пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçе

Чăваш Республикин Ĕçлев тата социаллă хÿтлĕх министерстви пĕлтернĕ тăрăх, 2020 çулхи III кварталта вăтамран пĕр çын пуçне тивекен пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçе 9804 тенкĕпе /II кварталта 9763 тенкĕ пулнă/ танлашнă. Халăхăн социаллă-демографи ушкăнĕсем тăрăх пăхсан: ĕçлеме пултаракан ÿсĕмрисен – 10414 тенкĕ /10361 тенкĕ/, пенсионерсен – 7951 тенкĕ /7939/ тенкĕ, ачасен – 9883 тенкĕ /9851 тенкĕ/.

## Пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçене тата ĕç укçин чи пĕчĕк виçине çĕнĕлле шутлама пуçлаççĕ

Хальхи вăхăтра пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçене кашни кварталта потребитель карçинккин /унта апат-çимĕç продукчĕсем кĕреççĕ/ хакне шута илсе палăртаççĕ. Капла майпа шутланăран пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçе – ĕç укçин чи пĕчĕк виçи те унран килет – çĕршыври халăхăн тупăшĕн ÿсĕмĕнчен юлса пырать.

Малашне пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçене тата ĕç укçин чи пĕчĕк виçине медианлă ĕç укçипе тата медианлă тупăшпа çыхăнтарĕç. Медианлă ĕç укçи – ĕçлекенсене пурне те çурмалла пайланин кăтартăвĕ. Çуррин шалăвĕ çак кăтартуран пысăкрах, тепĕр çуррин – пĕчĕкрех. Медианлă тупăш – халăхăн пĕр пайĕн тупăшĕ çак кăтартуран пысăкрах, теприн – пĕчĕкрех.

Çĕнĕ меслетпе шутласси çине куçсан пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçе тата чи пĕчĕк ĕç укçи чылай гражданинăн тупăшĕпе тата шалăвĕпе пĕр тан ÿссе пырĕç.

2021 çулта чи пĕчĕк ĕç укçи медианлă ĕç укçин 42 проценчĕпе е 12792 тенкĕпе танлашĕ. Хальхи вăхăтрипе /12130 тенкĕ/ танлаштарсан чи пĕчĕк ĕç укçи 5,5 процент ÿсет. Çак ÿсĕм 3,9 миллион çынна, çак шутран 1,8 миллионĕ бюджетниксем, пырса тивет.

Раççейре пĕр çын пуçне тивекен пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçе медианлă тупăшăн 44,2 проценчĕпе е 11653 тенкĕпе танлашать. Хальхи вăхăтри кăтартупа танлаштарсан 3,7 процент ÿсет. Пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçене кашни çул çирĕплетĕç.

Çав вăхăтрах чи пĕчĕк ĕç укçин çитес çул валли çирĕплетнĕ пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçерен пĕчĕкрех пулма юрамасть – çакна халĕ Конституци те шантарать. Пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçепе медианлă тупăш, чи пĕчĕк ĕç укçипе медианлă шалу шайлашăвне пилĕк çулта пĕр хутран кая мар пăхса тухĕç.

ЧĂНЛĂХ
Учредитель – «Раççей Федерацийĕнчи Коммунистсен партийĕ» политика партийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ

Тĕп редактор
Данилов Г. В.

Хаçата Çыхăну сфери, информаци технологийĕсем тата массăллă коммуникацисем енĕпе ĕçлекен федераллă служба Чăваш Республикинчи управленийĕнче регистрациленĕ.

Регистраци свидетельстви
ПИ №ТУ 21-00407,
2016 çулхи июлĕн 18-мĕшĕ

Хаçатра илсе кăтартнă фактсемпе пĕлтерÿсемшĕн авторсем яваплă. Ал çырăвĕсемпе ытти материалсене регистрацилемеççĕ, авторсене тавăрса памаççĕ.

Материалсене илсе пичетленĕ чух пирĕн хаçат ятне асăнмалла.

Редакци тата издатель адресĕ:
428013, Шупашкар хули,
Мир просп., 82 А çурт,
тел.: 8(8352) 28-99-91
e-mail: kprfpress@bk.ru

Хаçата «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ.
Адресĕ: Шупашкар хули,
И.Я.Яковлев просп., 13-мĕш çурт.

Тираж 5000 экз. Заказ №
Хаçат тÿлевсĕр саланать.